Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

41 (7572) № ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи майăн (çу) 31-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республика кунне хатĕрленетпĕр

## Муркаш куç умĕнчех çĕнелет



Физкультурăпа спорт комплексĕ июнĕн 19-мĕшĕнче хута каймалла.



Физкультурăпа спорт комплексĕ хыçĕнчи кӳлĕ кунсерен тулса пырать. Чăн-чăн кану вырăнĕ пулĕ кунта.



ТСК «Парнас» чикĕллĕ яваплăхлă общество – кунти тĕп подрядчик. Унăн ĕçченĕсем хăйсен ĕçĕн ответлăхне туяççĕ.

Çапла пĕтĕмлетет паян Муркаша килекен район центрĕ куç умĕнчех илемленсе улшăннине курса тата ăна тивĕçлĕ хак парса. Урамсене çĕнĕ асфальт сарнине курсан, çуртсене çĕнĕ хăт кĕнине пăхсан тата асфальт-тротуар тăрăх ун хĕррипе лартнă илемлĕ чечексене пăхса утсан, урăхла калаймăн та. Илемленет Муркаш!

Район центрĕнче хĕрӳ ĕç шавĕ тăнă самантра хăй вăхăтĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн пĕрремĕш çумĕ тата ЧР Ял хуçалăх министрĕ пулнă Петр Васильевич Ивантаевпа тĕл пултăм. Пурнăçра ĕçпе палăрнă ентеш ырă улшăнусем тĕлĕшпе çуралнă савăнăçне пытармарĕ:

– Илемленет кăна мар, тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа çĕнелет Муркаш. Хăй вăхăтĕнче манăн Белгород облаçĕнчи район центрĕсенче пулса курма тӳр килнĕччĕ. Унти илеме ырă кĕвĕçӳпе пăхнăччĕ. Акă пирĕн патăмăра та çав илем çитрĕ. Савăнмалла куншăн. Çĕнетӳсем райцентрăн тĕп урамне хула шайне çитерчĕç. Хулапа танлашма пĕр çитменлĕх çеç – троллейбуссем çук, – йăл кулчĕ Петр Васильевич физкультурăпа спорт комплексĕ енчен куç вĕçертмесĕр. – Тăвасса тăватпăр та-ха, анчах ăна тытса тăрас пулать. Ку вара татах та ответлăрах ĕç. Анчах ĕçрен хăраман Муркашсем çакна та хăй еккипе ямасса ĕненетĕп.

– Мĕнре куратăр-ха илем никĕсне, Сирĕн шутпа ăçтан пуçланать вăл?

– Район центрне çакнашкал хăт кĕртни пĕр-икĕ çын ĕçĕ мар. Муркашсен культура шайĕ çĕнĕ карта хăпарнине пĕлтерет вăл. Çакна ялсене тухсан та асăрхама пулать. Çынсем илемлĕ çуртсем çĕклеççĕ, хăйсем пурăнакан урамсене харпăр хăй вăйĕпе илем кĕртеççĕ. Çакна район шайĕпе пăхсан, Муркаш Ен пуçлăхне ырăпа асăнас килет. Юрий Александрович хăй пысăк культурăллă çын пулнăран Муркашра пурнăç культури çине пысăк тимлĕх уйăрни ют япала мар. Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Иванович Никитин ялсемпе урамсенчи тирпейлĕхшĕн епле тăрăшнине курсан тĕлĕнетĕн те, савăнатăн та. Пирĕн çынсем культура сăмаха ташă-юрăран анлăрах йышăнма пуçлани çĕнĕ малашлăх çурататать. Çак культура çынсене çĕнĕлле воспитани парасси пирки те паян манăн иккĕленӳ çук.

– Çапла район пысăк уява хатĕрленет. Эпир вара паян кашниех хамăр ял-урама тирпей-илемпе хăт кĕртни çак уявшăн çеç пулмасса, вăл малашне пирĕн кулленхи ĕç вырăнне юласса шанатпăр, – терĕм те, Петр Васильевичран уйрăлса, хĕрӳ ĕç шавĕпе тулнă физкультурăпа спорт комплексне çул тытрăм. Кунта ĕçсем вĕçленсе пыни вара татах савăнăç хушрĕ.

Пысăк пӳлĕмсем, тарăн та вăрăм бассейн, комплекс хыçĕнчи куллен тулса пыракан кӳлĕ район культура шайĕнче татах тепĕр утăм малалла туни çинчен калать. Вулавçăсене пĕлме: хута яма 101 миллион тенкĕ хывнă физкультурăпа спорт комплексĕ июнĕн 19-мĕшĕнче уçăлмалла.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Тепĕр 3 эрнерен çак бассейн тăрă шывпа тулĕ.

Республика кунне районта уявличчен 24 кун юлчĕ

Ыран – Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире ачасене хӳтĕлемелли Пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе саламлатăп!

Çак ырă, черчен, çутă уява эпир çăвăн пĕрремĕш кунĕнче уявлатпăр. Ачасем – пирĕн шанчăк, мухтав тата никĕс. Вĕсем пирĕн чĕресене ăшăпа юрату кӳреççĕ, пире ăслăрах та ырăрах тăваççĕ.

Чăваш Енте ачасемшĕн тăрăшасси патшалăх политикинче тĕп вырăн йышăнать. Амăшлăхĕпе ачалăха упрассипе тунă ĕçсем ачасем çуралассине ӳстерме тата пĕчĕк ачасем вилессине чакарма май пачĕç. Çитĕнекен ăру хăйĕн пултарулăхне вĕренӳре, спортра, пултарулăх ĕçĕнче кăтартма пултарать. Çакна тума сывлăха сыхлассине, вĕрентĕве çĕнетсе улăштарни, социаллă, культура, спорт учрежденийĕсене анлăн хута яни май параççĕ.

Республикăра 2007 – 2010 çулсем валли йышăннă «Чăваш Ен ачисем» тĕллевлĕ программа ăнăçлăн пурнăçланать. Тăлăх ачасем, нумай ачаллă çемьесем, инвалид ачасем çине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Эпир ачасене тӳлекен федераллă пособисен йĕркине сыхласа хăвартăмăр çеç мар, апрелĕн 1-мĕшĕнчен вĕсен виçисене те ӳстертĕмĕр.

Чăваш Енĕн çамрăк çыннисем яланах хăйсемшĕн тимленине, тăрăшнине туйса тăччăр. Вĕсем ăслă, ырă кăмăллă, хăйсен çĕршывне, республикине юратакан çынсем пулса ӳсчĕр. Пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, тулăх пурнăç тата телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

**ХАКЛĂ АЧАСЕМ ТАТА АШШĔ-АМĂШĔСЕМ!**

Сире Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе чунчĕререн саламлатăп.

Ачалăх кашни çыннăн пурнăçĕнче манăçми йĕр хăварать. Унăн шăпи мĕнле пуласси те вăл ача чух мĕнле воспитани илнинчен нумай килет. Çавăнпа та пирĕн ачасене мĕн пĕчĕкрен ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен пуян пулма, аслисене хисеплеме, кĕçĕннисемпе вăйсăррисене пулăшма, Тăван çĕршыва юратма хăнăхтармалла. Çакна хамăрăн ырă тĕслĕхпе çирĕплетмелле. Пире курса, вĕсем те йывăрлăхсене çĕнтерме пултарччăр, чун-чĕрепе илемлĕ пулччăр, ырă ĕçсем ытларах туччăр. Вара район малашлăхĕ те, çĕршыв пуласлăхĕ те шанчăклă та çирĕп аласенче пулĕ.

Пирĕн çĕршывăмăр паян ачаллă çемьесене питĕ пысăк тимлĕх уйăрать. Çавăнпа пĕрлех ачашăн çемье ăшшинчен, атте-анне юратăвĕнчен хакли нимĕн те çуккине асра тытасчĕ. Килте хăйне ăнланнине, кирек хăш вăхăтра та хăйне пулăшма пултарнине туйса ӳсекен ачасем хăйсене телейлĕ туяççĕ, пурнăçра хăйсен вырăнне тупаççĕ. Ашшĕ-амăшĕшĕн вара ачисен телейĕнчен хаклăраххи нимĕн те çук. Апла пулсан ачасем сывлăхлă та телейлĕ çитĕнччĕр тесе хамăртан килнине йăлтах тăвасчĕ.

Пурне те сире çирĕп сывлăх, ăнăçу, чăтăмлăх, иксĕлми ырă кăмăл, телейлĕ те вăрăм кун-çул сунатăп. Çемйĕрсенче килĕшӳпе тату пурнăç пултăр, сăн-питĕртен телей шевли ан кайтăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Район администрацийĕнче

## Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2008 çулхи майăн 5-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе награддăланă***

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăлла активлă ĕçшĕн **Валентина Алексеевна ЛЮБИМОВАНА**, Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхне.

Нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн **Петр Ананьевич РОМАНОВА**, Муркаш район сучĕн хуралçине.

Страхлакан системăра нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăллă активлă ĕçшĕн **Юлия Семеновна ПИКУШКИНАНА**, «Росгосстрах-Поволжье» филиалĕн Муркашри пайĕн страхлакан агентне.

Газ промышленноçĕнче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн **Данил Петрович ШАЛТЫНОВА**, «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн тĕп инженерне.

Çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçри ӳсĕмсемшĕн **Эльвира Димитриевна ЯРИКОВАНА**, Çатракасси шкулĕнчи вĕрентекене.

Вĕрентӳ ĕçĕнче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн **Венер Александрович АЛЕКСАНДРОВА**, педагогика ĕçĕн ветеранне.

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2008 çулхи майăн 19-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе награддăланă***

Çыхăну системинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн **Вениамин Александрович АНДРЕЕВА**, Муркашри линипе техника цехĕн электромонтерне»;

**Татьяна Николаевна ПИКУЗОВАНА**, инженера.

Сĕт промышленноçĕнче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн **Маргарита Максимовна ЕРМОЛАЕВАНА**, «Вита» юлташлăх бухгалтерне.

Ял хуçалăх производствинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн **Николай Димитриевич ИВАНОВА**, Ильич яч. хис. хуçалăхри юсавçăна.

Çамрăк ăрăва воспитани парас ĕçре нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн **Луиза Николаевна ЕФИМОВАНА**, Муркашри ачапăча искусство шкулĕн преподавательне.

Правительствăра

## Сывлăх тата çĕр ыйтăвĕсемпе

ЧР Президенчĕ Николай Федоров юн кун Министрсен Кабинечен черетлĕ ларăвне ирттерчĕ.

Кун йĕркине чылай ыйту кĕртнĕ. Анчах вĕсенчен чи пĕлтерĕшли «Чăваш Республикинче пурăнакансен 2007 çулхи сывлăхĕ çинчен» доклад пулчĕ. Ăна ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çуме - сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕ Нина Суслонова турĕ. Çак документра Чăваш Енри медицинăпа демографи лару-тăрăвне пур енлĕн тĕплĕн тишкернĕ, сывлăха сыхлакан тытăмĕн ресурсĕсене, ку енĕпе приоритетлă наци проекчĕ епле пурнăçланса пынине кăтартнă.

Чăваш Республикин патшалăх пурлăхне 2009 çулта харпăрлăхлатма палăртнă программăна правительствăн иртнĕ ларăвĕн кун йĕркине кĕртнĕччĕ. Анчах министрсем ку ыйтупа пĕр шухăшлă пулаймanран йышăну тăваймарĕç.

Кăçалтан пуçласа пирĕн республикăра сухаламан-акман çĕрсене çаврăнăша кĕртме тытăннă. Çакна пурнăçлама каякан хушма тăкаксене саплаштарма ЧР Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе районсем валли 15 миллион тенкĕлех субсиди уйăрĕç.

Президент шучĕпе, унпа вырăнта мĕнле усă курнине Ял хуçалăх министерствин тăтăшах тĕрĕслесе тămалла. Ку енĕпе тивĕçлĕ шайра ĕçлемен районсен субсиди тӳпине ыттисене пайласа памалла.

Ларăва хутшăннисем ЧР Министрсен Кабинечĕн «2008 çулта çулсене тытса тăма тата юсама Чăваш Республикин бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрасси çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртрĕç.

«Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ята камсене памалли ыйтăва та сӳтсе яврĕç, тивĕçлĕ йышăну турĕç.